Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

101-102 (7741-7742) №№ * Шăмат кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 19-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Çамрăксен çулталăкĕ

## Ĕçре – ӳсĕмсен çулĕпе

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Ирина Александровна Яковлева Москакассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче вăй хурать. Шупашкарти медицина колледжне пĕтернĕ хыççăн вăл кунта пĕлтĕртенпе пĕтĕмĕшле практика медицина сестринче тăрăшать.*

*Опытлă ĕçтешĕсенчен хальлĕхе вĕренсе пымалли çук мар-ха унăн, анчах та çамрăк специалист кулленхи ĕçре хастар пулни ӳсĕмсем патне илсе çитересси те инçе мар. Хăйне килĕшнĕ професси суйласа илнĕскер, Ирина Александровна таврари çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшассине яланах мала хурать.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



ЧР Президенчĕн Çырăвĕ

## Хăвăр шухăша пĕлтерĕр

***Декабрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Патшалăх Канашне янă «Чăваш Ен: пуласлăхра тата пуласлăх валли» Çырăвĕпе паллаштарчĕ. (Çыру хаçатăн паянхи номерĕн 3-мĕшпе 4-мĕш страницисенче пичетленет). Çак Çыру вăл халиччен туса ирттернĕ ĕçсене тишкерсе хак пани тата пирĕн аталанăвăн малашлăх программине палăртни пулса тăрать. Хаçат вулакансене пысăк пĕлтерĕшлĕ çак Çыру пирки хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме ыйтатпăр. Апла пулсан сирĕнтен çырусем кĕтетпĕр.***

**Николай Иванович НИКИТИН, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Президент Çырăвĕпе тĕплĕн паллашнă май çавна палăртмалла. Президент экономика аталанăвне çĕнĕ шая çĕклеме, наука çĕнĕлĕхĕсемпе анлăрах усă курма кирлине малти вырăна кăларнипе пĕрлех экологи, тавралăх тирпей-илемĕ çине те пысăк тимлĕх уйăрать. «Чăваш Республикин Çут çанталăк министерствин йăлари каяшсем пухăнса пынине тата вĕсене тирпейленине тĕтăшах асăрхаса тăрассине тивĕçтермелле»,– тенĕ Çырура.

Юлашки вăхăтра ку ыйтусемпе эпир çине тăрса ĕçлесе пытăмăр. Район центрĕ, Муркаш урамĕсем юлашки 1–2 çул хушшинче епле илемленсе хăтлăланнине никам та курмасăр тăма пултараймасть. Çак илемлĕхе вара тытса-пăхса тăрас пулать. Район сучĕ, налук инспекцийĕ, казначействипе енĕпе ырă сăмах калама пулăттăм. Çирĕплетсе панă территорисене вĕсем никам хушса-каласа тăмасăрах йĕркеллĕ пăхса тăраççĕ. Анчах та хăш-пĕр предприятисемпе организацисем тĕлĕшпе çакна калама çук-ха.

Сĕт-çу завочĕ, Малиновка ялĕ патĕнче санкцилемен çӳп-çап тăкмалли вырăнсем туса хунăччĕ. Кунти тасамарлăха тиесе тухса йĕркене кĕртме май килчĕ.

Çурхи-кĕрхи вăхăтра йывăççем лартса хăварасси çине тимлĕх уйăратпăр. Кăçал та ку енĕпе ĕçлемен мар. Асăннă ĕçре шкул ачисем пысăк пулăшу параççĕ. Хăйсен ирĕкĕпе çак ĕçе туса ирттерекенсем пурри те савăнтарать. Акă кăçал «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн ĕçченĕсем, Ленин урамĕнче пурăнакансем кӳлле йĕнне пуçарулă пулнине палăртмалла.

Йăлари каяшсене вырнаçтарасси пирки чылай тимлеме тивнĕччĕ. Районта çĕнĕ полигон хута кайсан ку ыйту çăмăлланасси паллă. Ноябрь уйăхĕнче Çĕньял Муркашра йăла каяшĕсене пухма 5 контейнер вырнаçтарнă. Каяшсене турттарса тăма асăннă ял çыннисемпе килĕшӳ турăмăр ĕнтĕ.

Президент хăйĕн Çырăвĕнче палăртакан тепĕр çĕнĕлĕх пирки те асăнса хăварнă пулăттăм. Документсемпе ĕçлесси малашне ытларах электронлă система урлă пулса пырĕ. Çавна май документсемпе ĕçлессин республикăри пĕрлехи системине кĕме хатĕрленетпĕр.

Пĕр сăмахпа ĕçлемесетпĕр тесе калас килмест, апла пулин те Çырура лартнă задачăсене пурнăçласипе пурин те татах тăрăшарах ĕçлеме кирли паллă.

**Владимир Вячеславович ПЕТРОВ, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ:**

– Президент хăйĕн Çырăвĕнче умри тĕллевсене пурнăçлама ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен те, ăс-тăнпа кăмăл-сипет, ăс-хакăл енĕпе те сывă çынсем кирлине тĕрĕсех палăртрĕ. Пире сывă ăру кирлĕ, сиенлĕ йăласенчен хăтăлса пырас пулать. Пирĕн чи малтанах спортпа, физкультурăпа туслă пулнипе палăрса тăмалла. Эрех-сăра ĕçессине, пирус туртассине, наркотиксемпе айкашассине вара пур енлĕн сивлемелле. Сывă обществăра кăна сывă çын пулма пултарать, обществăшăн, халăхшăн тата çĕршыв пуласлăхĕшĕн палăрмалла витĕмлĕ утăмсем тăвăпăр. Апла пулсан сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси пирĕн кулленхи норма пулса тăтăрччĕ.

Пирĕн районта физкультурăпа спорт ĕçĕ-хĕлĕ япăх шайра пулман. Тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ вĕçĕмех, республика, Раççей шайĕнче районăн чысне çĕклекен пултаруллă спортсменсем те çук мар. Район центрĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ туса кайни те ку енĕпе пысăк майсем уçса парать. Малашне çитĕнӳсем татах та пысăкрах пулĕç тесе шутлатăп. Апла пулсан сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырассишĕн çине тăрса ĕçлер.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Ыр кăмăллăх

## Марафон малалла пырать

Ачасен ыр кăмăллăх марафонне хутшăнса, районти предприятисемпе организацисем укçа-тенкĕ куçараççĕ. Вĕсем хушшинче районти социаллă хӳтлĕх пайĕ (1395 тенкĕ), районти социаллă пулăшу паракан центр (1350 тенкĕ), РФ Пенси Фончĕн районти управленийĕ (4168 тенкĕ), вырăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци (2640 тенкĕ), район администрацийĕн финанс пайĕ (1980 тенкĕ), ветерансен районти хорĕ (750 тенкĕ).

Тăхăнма ача-пăча тумтирĕ леçсе парса пулăшакан уйрăм çынсем те çук мар. Кусем вĕсем район центрĕнчи «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче ĕçлекенсем, Муркашра пурăнакансем Е.П. Иванова, Ю.Д. Вязова, Е.С. Куликова, Е.В. Круглова.

Пулăшакана Турă та пулăшать тесе ахальтен каламан. Ыр кăмăллăх марафонĕнчен никамăн та айккинче тăрса юлас марччĕ.

**Хамăр инф.**

Сывлăх

## Юн параççĕ

Муркаш районĕнче донор кунĕсем пыраççĕ. Акă декабрĕн 15-мĕшĕнче Москакассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче те юн парас текенсем пухăнчĕç. 47 çын пĕтĕмĕшле 18,8 литр юн панă. Вĕсем 100-шер тенкĕ компенсаци укçи тата икшер канмалли кун «ĕçлесе илнĕ».

Унччен Йӳçкассисем, пĕтĕмпе 79 çын, 31,6 литр юн панă.

Пуçтарăнакан юна Шупашкарти юн яракан станцине тĕрĕслеве илсе каяççĕ, кайран вара консервациялеççĕ.

Районта донор кунĕсем декабрь вĕçленичченех пыраççĕ. Апла юн парса йывăр чирлисене пулăшас текенсем пархатарлă ĕç тума кая юлман-ха. (Аста, хăçан юн памаллине хаçатăн 99-мĕш номерĕнче пичетленĕччĕ).

Çамрăксен çулталăкĕнче

## Чăваш çамрăкĕсен – çĕнĕ организаци

Чăваш наци конгресĕ çумĕнче «Хастар» ятлă Чăваш Республикин çамрăкĕсен обществăлла организацийĕ ĕçлеме тытăннă. Декабрĕн 16-мĕшĕнче унăн активисчĕсем Чăваш патшалăх педагогика университечĕн тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕсемпе тĕл пулнă.

Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ Валентин Абрамов çамрăксене чăваш халăхĕн культурипе хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварма пулăшакан проектсенче активлă хутшăнма сĕннĕ.

«Хастарăн» председателĕ Татьяна Николаева çамрăксен çĕнĕ организацийĕн активĕпе паллаштарса «Чăваш ачи, сассуна пар!» ятпа иртнĕ Чăваш çамрăкĕсен 1-мĕш форумĕ пирки чарăнса тăнă, малашне пурнăçламалли ĕçсем çинчен те каланă. «Хастар» активисчĕсем чăваш чĕлхине, тăван халăхăн йăли-йĕркисене упраса хăварассипе ялти çамрăксемпе тачă çыхăнса ĕçлемеллине палăртнă.

Юбилей

## Саламлатпăр

Юратнă мăшăр, анне Уйкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Татьяна Александровна АЛЕКСЕЕВА** паян 45 çул тултарать. Уяв ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр. Тавах эсĕ пурришĕн, ывăр самантра пуçа усманшăн, яланах ăшă кăмăллă пулнăшăн, çемье телейне упранăшăн.

**Салампа: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕсем Светлана, Анюта, Эвелина, ывăлĕ Юра.**



**СТЕПАНОВУ Ираиду Алексеевну**, учительницу начальных классов Моргаушской средней школы, поздравляем с юбилеем!

Слов хороших не жалеем,  
Мы желаем всей душой  
Только радости большой.  
Пусть годы не старят тебя никогда,  
Мы очень и очень все любим тебя.  
Желаем здоровья, желаем добра.  
Живи долго-долго,  
Ты всем нам нужна!

**Родные, близкие.**



Поздравляем с 60-летним юбилеем **ПЕТРОВА Николая Федоровича**!

Пусть ангел жизнь твою хранит,  
Беда пускай тебя не знает,  
Пусть горе от тебя бежит,  
Друзья пускай не забывают.  
Пусть радость, счастье, смех,  
Удача, нежность и успех,  
Как лучезарная звезда,  
Тебе сопутствуют всегда.

**Жена, дочери, зять, внуки, родные.**

ÇЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Çавăнпа та почтальонсемпе паянтаранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Хаçата унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Çитес çулта та пĕрле пулăр!**

Йыхрав

## Черетсĕр лару иртет

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2009 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнчи 39 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 38-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче 2009 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче 10 сехетре пухаççĕ. Ларура пăхса тухма кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем хушшинче:

– Муркаш районĕн Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.

– Муркаш районĕнче преступноспа кĕрешессине вăйлатмалли 2010–2012 çулсенчи комплекслă программа çинчен.

– Районăн муниципаллă хăрпăрлăхĕнчи пурлăхне ял тăрăхĕсен харпăрлăхне парасси çинчен.

– Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕн хăш-пĕр полномочийĕсен пĕлĕвне йышăнасси çинчен.

– Депутатсен районти Пухăвĕн 2006 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнчи С-7/2 № «Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕ çинчен калакан положение çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

– Депутатсен районти Пухăвĕн 2010 çулхи ĕç планĕ çинчен.